Лермонтов М.Ю. Тĕрме çынни; Чул ту; Хумсемпе çынсем; Тусен тăррисем; Пурнăç курки; Пирĕшти; Калашник хуçа çинчен хунă юрă : [сăвăсем] / М.Ю. Лермонтов; вырăсларан К.В. Иванов куçарнă // Лермонтов М.Ю. Сăвăсем / М.Ю. Лермонтов. – Шупашкар, 1941. – С. 58-87.

# Тĕрме çынни

Уçăр манăн тĕрмене,
Кăтартăр кун çуттине,
Парăр хура куçлă хĕр,
Хура çилхеллĕ лаша.
Эпĕ çамрăк сар хĕре
Малтан тутлă чуптăвăп,
Лашам çине утланăп,
Çеçен хире кустарăп.
Тĕрме чӳречи çӳлĕ;
Йывăр алăк çăраллă;
Хура куçлă хĕр инçе,
Хăйĕн хитре пӳртĕнче;
Çеçен хирте ыр утăм
Пĕр пĕччене, йĕвенсĕр,
Сиксе çӳрет выляса,
Хăй хӳрине тустарса.
Эпĕ пĕччен, ырри çук:
Çӳлĕ хӳме ман тавра;
Лампат çунать кĕтесре
Сӳнес пекех ялкăшса;
Алăк хыçĕнче анчах
Ура сасси илтĕнет:
Унта хуралçă-салтак
Утса вăхăт ирттерет.

1837.

## Чул ту

Чул ту айккинче
Ылттӑн пӗлӗт ҫӗр касна.
Ирех ирхине
Вӗҫсе, выляса кайнӑ.
Анчах чул ҫинче
Нӳрлӗ йӗрӗ палӑрать.
Чул ту пӗр-пӗччен
Хуллен йӗрет, хурланать.

1841.

## Парӑс

Пĕччен парӑс шуррӑн куранать
Кӑвак тинĕс тĕтри ӑшĕнче...
Мĕн инҫе, ют ҫĕрте вӑл шырать?
Мĕн хӑварнӑ вӑл хӑй килĕнче?
Чӳхенеҫҫĕ хумсем, ҫил улать,
Шӑтӑр-шатӑр юпа авӑнать...
Анчах парӑс телей шырамасть,
Телейрен те тарса вӑл каймасть!
Ҫутӑ юхӑм унӑн айĕнче,
Ҫӳлтен ылттӑн хĕвел ҫутатать;
Канӑҫсӑр! ҫил-тӑвӑл шавĕнче
Канлĕх пур пек, тӑвӑл вӑл ыйтать.

1832.

## Хумсемпе çынсем

Сивĕ хумсем юхаççĕ,
Ушкăн-ушкăн чупаççĕ
Çатăлтатса, шавласа;
Çаплах çынсем килеççĕ,
Кĕтĕвĕпе иртеççĕ,
Хумсем пекех черетпе.
Ирĕк хаклă хумсемшĕн,
Сивĕ хаклă вĕсемшĕн
Пуринчен те ытларах;
Ăшă чунлă пуласшăн
Çынсем... анчах пăхсассăн—
Чунĕ хумран сивĕрех.

1830.

## Тусен тăррисем

Çӳлĕ тусен тăррисем
Çывăраççĕ тĕттĕмре.
Лăпкă, сивĕ айлăмсем
Пытанаççĕ тĕттĕмре.
Вĕçмест çул çинчи тусан,
Чĕтремеççĕ çулçăсем...
Санăн та пăртак тăрсан
Канĕç шăмму-шаккусем.

1840.

## Пурнăç курки

Пурăнăçăн куркинчен
Куçа хупса ĕçетпĕр,
Ылттăн курка хĕррине
Куççульсемпе йĕпетсе.
Вилес вăхăт çитсессĕн,
Куçа уçса пăхсассăн,
Мĕнпур пире илĕртни
Куç умĕнчен çухалать.
Вара эпир куратпăр:
Ылттăн курка пушах мĕн,
Шыв выранне уй анчах,
Вăл та пулин пирĕн мар!

1831.

## Пирĕшти

Пĕлĕт тăрăх çур çĕрте
Вĕçсе пынă пирĕшти,
Шăппăн юрă юрласа.
Уйăх, çăлтăр, пĕлĕт те
Ырă юрра итленĕ,
Ушкăнĕпе пухăнса.
Вăл рай пахчи хӳттинче
Çылăхсăр чун савăнса
Тăни çинчен юрланă.
Аслă Турра-Пӳлĕхе
Хăй юрринче асăнса
Чăн кăмăлтан мухтанă.
Асапланма, хурланма
Вăл çамрăк чун çĕр çине
Йăтса пынă аллинче.
Асăнмалăх юлнă çав
Чĕрĕ юррăн сăввисем
Çамрăк чунăн чĕринче.
Ку тĕнчере çамрăк чун
Çӳлти ырă пурнăçшăн
Пăшăрханнă нумайччен.
Анчах пĕлĕт юрри пек
Кунти кичем юрăсем
Ун чĕрине витеймен.
1831.

## Иван ёмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата саттур Калашник хуçа çинчен хунă юрă

Эй аслă патша, эй Иван ёмпӳ!
Сан çинчен эпир юрă хутăмăр,
Ху юратнă чуру, сыхлавçу çинчен,
Тата паттăр хуçа Калашник çинчен;
Ёлĕкхи шайпа юрă хутăмăр,
Кĕслепе вылятса юрра ятăмăр,
Пĕр вуларăмăр, такмакларăмăр.
Ăна ырă халăх итлесе тăчĕ,
Çине аслă улпут Раматан Матви
Куркипех тыттарчĕ пире йӳçĕ пыл,
Унăн шурă питлĕ сарă арăмĕ
Кĕмĕл тиркĕ çинче çĕклесе пычĕ
Пурçăнпа тĕрленĕ çĕнĕ алшăлли,
Виçĕ кун, виçĕ каç хăна пултăмăр,
Çак юрра итлесе тăранаймарĕç çав.

### I.

Çӳлти ылттăн хĕвел çутатса пăхмасть,
Ун çине шур пĕлĕт савăнса пăхмасть:
Çав сĕтел хушшинче ылттăн çĕлĕклĕ

Иван ĕмпӳ ларать, хăй хаяр патша.
Хыçĕнче тăраççĕ кĕрекеçисем,
Улпутсем, кĕнеçсем патшана хирĕç,
Икĕ айăккинче сыхлавçийĕсем;
Хăй чунне йăпатса ĕçкĕ-çикĕ тăвать
Турă ырлăхĕпе çак Иван ĕмпӳ.

* * *

Кăмăллă пăхса патша хăй хушать
Ылттăнлă куркине туллирен тулли
Хаклă йышши тутлă эрехсем яма,
Сыхлавçисене ĕçтерсе тухма.
Вара пурте ăна мухтаса ĕçрĕç.

* * *

Пĕри çеç çавăнта сыхлавçисенчен,
Пĕр йĕкĕт паттăр, пĕр саттур каччă,
Майăхне йĕпетмест, эрехне ĕçмест;
Тĕксĕм куçĕсене çĕре чикнĕ вăл,
Анлă кăкăр çине пуçне уснă вăл,—
Кăкăрĕ айĕнче çирĕп шухăш пур.

* * *

Пĕрĕнет ĕмпĕвĕн хура куçхарши,
Пăхать каччă çине çивчĕ куçĕпе,
Пĕлĕтсем тăрринчи хурчăка пекех
Тытас та çиес пек сăнаса пăхать,
Çĕклемерĕ куçне йĕкĕт, сар каччă.
Ак ĕмпӳ урайне туйипе çапать,

Юман урайне çур шите яхăн
Тимĕр вĕçлĕ туя шăтарса кĕчĕ,
Хускалмарĕ татах йĕкĕт, сар каччă.
Ак ĕмпӳ хыт сăмах пуçласа ячĕ;
Вăранать вара тин йĕкĕт, сар каччă.

* * *

„Эй, пăх-ха кунталла, Кирибей чурам,
Кирлĕ мар шухăшсем пуçănта çук-и?
Е патша мухтавне ăмсанатăн-и?
Е ĕçре çӳреме йăлăхтарчĕ-и?
Хĕпĕртеççĕ çăлтăрсем уйăх тухнă чух,
Çутăра выляма лайăхрах тесе;
Пĕлĕтсем айнелле пытанан çăлтăр
Савăнтах çĕр çине сирпĕнсе анать.
Аван мар-çке сана, Кирибей чура,
Патша савăннă чух йĕрĕнсе тăма;
Скуратсенĕн йăхĕ санăн йăху-çке,
Малюта çемьинче эсĕ ӳсрĕн-çке!..“

* * *

Ак хаяр çилĕллĕ патшана çапла
Пилĕкрен пуççапса Кирибей калать:

* * *

— „Эй аслă патшамăр, эй Иван ĕмпӳ!
Юрăхсăр чуруна ан çилен, патшам:
Ман вĕри чĕреме эрех сивĕтмĕ,
Ман тĕттĕм шухăшăм сăйпа çарăнмĕ!

Çилле кӳтӗм сана, патша ирӗкӗ;
Касма хуш пуçăма, вӗлерттер мана.
Хулпуççи çийӗнче усăнать пуçăм,
Нӳрлӗ çӗр патнелле туртăнать пуçăм".

* * *

Чуринчен ыйтрӗ вара Иван ӗмпӳ:
„Мӗншӗнех йӗкӗтӗн çав тер хуйхă пур?
Çӗтӗлсе пӗтрӗ-шим тӗрӗллӗ сăкман?
Хутланса пӗтрӗ-шим сăсар çӗлӗкӗ?
Саланса пӗтрӗ-шим касмăкри укçи?
Е хӗрттернӗ хӗçӗ катăлса пӗтнӗ-и?
Е начар таканран уксах-и лаши?
Е Мускав аслă шывӗ çинче ăна
Кӗрешсе ӳкерни хуçа ывăлӗ?"

* * *

Патшана хирӗç Кирибей çапла
Хăй кăтра пуçне силлесе калать:

* * *

— „Вăл тухатнă алă çуралман халччен,
Улпутсен, хуçасен йăхӗнче те çук;
Урхамах пек утăм ташласа çӳрет;
Кӗленче пек çутă ялтăрать хӗçӗм;
Ӗçкӗ-çикӗсенче, эсӗ ырăран,
Ыттинчен каях мар тумланатпăр-ха.

*
* *

— „Паттăр утăм çине утланса ларса
Мускав шывĕ çине чуптарса кайсан,
Хам пурçăн пиçиххи пилĕке çыхса,
Хуп-хура сăсар çĕлĕке эпĕ
Пуç тăрне тăхăнса чалăшрах лартсан,
Хăмапа çаптарнă хапхасен умне
Яр тухаççĕ çĕнĕ çынсем, сар хĕрсем,
Ман çине пăхаççĕ калаçса кулса;
Пĕри çеç калаçмасть, ман çине пăхмасть,
Чăпар шаль тутăрпа витĕнсе тăрать.

*
* *

— „Пирĕн ырă çĕрте, сарлака çĕрте,
Шырасах тупас çук ун пек хитрине;
Ярăнса утать шурă акăш пек,
Куçĕпе пăхать кăвакарчăн пек,
Сăмахне калать шăпчăк юрри пек.
Унăн пичĕсем хĕп-хĕрлех-ĕçке,
Ирсерен хĕрелсе хĕвел тухнă пек;
Çӳçĕсем сап-сарах, ылттăн пек çутă,
Хĕрлĕ çиптунипе çипленĕ çивĕч
Хулпуççи урлă явăнса выртать,
Шур ӳтлĕ кăкăрне чуп-туса выртать.
Вăл пуян хуçа çемьинче ӳснĕ,
Вăл Мĕтри хĕрĕ, Алюна ятлă.

*
* *

— „Ах, ăна курсанах анăрать ăн-пуç:
Çакă паттăр аллăн çухалать вăйĕ,

Ҫакӑ ҫивчӗ куҫӑм хуралса каять;
Йывӑр-ҫке, кичем-ҫке, эй аслӑ патшам,
Ҫакӑ ҫут тӗнчере пӗр-пӗччен ҫынна.
Йӑлӑхтарчӗҫ мана урхамах-утсем,
Йӑлӑхтарчӗ ылттӑн-кӗмӗллӗ тумтир,
Ылттӑн-кӗмӗл укҫа кирлӗ мар мана:
Кампала укҫама уйӑрӑп эпӗ?
Камсене кӑтартас ҫак саттурлӑха?
Камсене кӑтартса мухтанас тумпа?..
Атӑлӑн ҫеҫен хирӗсене яр мана,
Хирсенче пурӑнам, ирӗкре тӑрам,
Ҫак саттур пуҫӑма вӑрҫӑра хурам,
Тӑшманпа ҫапӑҫса вӑрҫӑра пӗтем;
Курайман тӑшмансем уйӑрса илӗҫ
Ырӑ утӑмпала ҫивчӗ хӗҫӗме,
Ырӑ утӑм ҫинчен йӗнерне хывӗҫ.
Мӗскӗн куҫӑмсене ҫӑхансем чавӗҫ,
Шӑммӑм-шаккӑма ҫумӑр-шыв ҫӑвӗ,
Пытарман, кӗл-туман хурлӑхлӑ ӳтӗм
Виҫ-тӑват еннелле саланса кайӗ..."

* * *

Вара ӑшшӑн пӑхса каларӗ патша:
„Эй, ан хуйхӑр чурам! эпӗ сан ӗҫне,
Эпӗ сан хуйхӑна пулӑшӑп пӑртак.
Ахах куҫ ҫӗррӗме сана хам парам,
Тата ылттӑн мӑя хатӗрле хӑна.
Малтан кай, чеерех евӗче пуҫҫап,

Унтан хаклă йышши парнесем ярăн
Хăвăн савнă хĕрӳ Алюну патне:
Кăмăлне килейсен, туйне вăйлă ту,
Кăмăлне килмесен, пире ан хурла".

* * *

— „Эй аслă патша, эй Иван ĕмпӳ!
Улталарĕ сана усал чурăву,
Каламарĕ сана тĕрĕсне-чăнне,
Каламарĕ сана сарă хĕр çинчен,
Качча кайнă-çке çав хуçа хĕрĕ,
Турă çырнă тăрăх, чиркӳ йĕркипе
Пĕр çамрăк хуçапа арлă-арăмлă".

* * *

Ай, ачисем, юрлăр-ха, кĕслĕрсене майласа!
Ай, ачисем, ĕçĕр-ха, ĕçĕрсене астуса!
Кăмăлне кӳрĕр-ха ырă улпутпа
Унăн шурă питлĕ сарă арăмне!

II.

Лавкинче сут-туса ларать çамрăк хуçа,
Парамун Çтаппанĕ, пĕр саттур каччă,
Хушамачĕпе Калашник хуçа;
Тĕрлĕ пурçăн тавар салатса хурать,
Кăмăллă сăмахпа çынсене кӳртет,
Ылттăнне, кĕмĕлне хисепе кӳрет.
Анчах çамрăк хуçан телей çук паян:
Улпутсем иртеççĕ лавки умĕнчен,
Пĕри те ун патне лавкине кĕмест.

* * *

Чиркӳре пуҫланать касхи кӗлӗсем;
Хӗвел тӗксӗм анать Кремль хыҫӗнче,
Сӗм-тӗттӗм пӗлӗтсем капланса килчӗҫ,
Юрласа хӑвалать вӗсене тӑвӑл;
Сарлака урам та пушанса юлчӗ.
Парамун Ҫтаппанӗ лавкине хупать,
Лавкине хупать вӑл юман алӑкпа,
Нимӗҫле уҫӑпа питӗрсе илет;
Хаяртан хаяр лӑкӑрти йытта
Сӑнчӑрпа мӑйӗнчен кӑкарса хурать.
Мускав шывӗ урлӑ килне утрӗ вӑл,
Ҫамрӑк арӑм патне шухӑша кайса.

* * *

Хӑйӗн ҫӳлӗ ҫуртне килсе ҫитрӗ вӑл,
Аптӑрать, тӗлӗнет Калашник хуҫа:
Ӑна хирӗҫ тухмасть ҫамрак арӑмӗ,
Шур сӗтел ҫиттипе сӗтелне витмен,
Сӳнес пек ҫункалать кӗтесри ҫурта.
Ватӑ карчӑк-тарҫа йыхӑрса калать:
„Эс кала, кала-ха, ырӑ карчӑкӑм,
Ӑҫталла ҫухалчӗ тӗттӗме кура,
Ӑҫталла пытанчӗ Алюна манӑн?
Манӑн савнӑ ывӑл-ачамсем паян
Кунӗпе выляса, ывӑнса пӗтсе
Иртенех ҫывӑрма вӗсем выртрӗҫ-им?"

* * *

— „Эй ырӑ хуҫам, эй Ҫтаппан хуҫам!
Халиччен пулманне каласа парам:
Ҫаҫхи кӗлле кӗҫӗр Алюна кайрӗ;
Ентӗ пуп та иртрӗ ҫамрӑк арӑмпе,
Ҫуртине ҫутрӗҫ те, апата ларчӗҫ;
Халӗ те пулин санӑн арӑму
Ҫывӑхри чиркӳрен таврӑнмарӗ-ха.
Ачусем-пӑчусем халӗ те пулин
Ҫывӑрма выртман та, выляса пӑхман,
Макӑрса йӗреҫҫӗ, чармалла та мар".

* * *

Сулхӑнланчӗ-ҫке ҫирӗп шухӑшпа
Вара ҫамрӑк пуҫӗ Калашник хуҫан.
Чӳречи витӗр вӑл урама пӑхать,
Вӑл курать: урамра тӗнче сӗм-тӗттӗм;
Шурӑ юр тӑкӑнать, ҫӳлӗ кӗрт пулать,
Ӑна ҫил вӗҫтерет, ҫын йӗрне шӑлать.

* * *

Пӑлтӑртан илтӗнчӗ: алӑк шарт хупрӗҫ,
Пӑлтӑртан пӗр этем васкаса кӗрет;
Ҫавӑнса пӑхрӗ те—ҫырлахсам Турӑ!
Тӑрать ун умӗнче ҫамрӑк арӑмӗ,
Шап-шурах сӑнлӑ хӑй, ҫарапуҫӑнах,
Сарӑ ҫивӗтӗсем саланса кайнӑ,
Ҫӳҫне те пуҫне те шурӑ юр пуснӑ,

Шывланнӑ куҫӗпе ухмах пек пӑхать;
Ӑнланми сӑмахсем тутипе калать.

* * *

—„Ӑҫта арӑм, арӑм, сулланса ҫӳрерӗн?
Мӗнле ҫын патӗнче, камсен килӗнче?
Мӗншӗн санӑн ҫӳҫу саланса кайнӑ,
Мӗншӗн санӑн тумтир ҫурӑлса пӗтнӗ?
Улпутсен ачисен хушшинче анчах
Ташласа савӑнса шав ҫӳрерӗн-тӗр!
Ҫакӑн пек хӑтланма санпала эпӗ
Арлӑ-арӑмланса мӑшӑрлантӑм-и?
Турӑшсен умӗнче тупа турӑм-и?..
Питӗрӗп лартӑп ак тимӗр уҫӑпа,
Тимӗрпе тыттарнӑ алӑксен хыҫне,
Ҫакӑ ҫут тӗнчене курмасса ӳлӗм,
Варланман ятӑма ҫӗртмессе ӳлӗм...“

* * *

Алюна упӑшкин сӑмахне илтсен
Чӗтресе кайрӗ, кӑвакарчӑнӑм,
Ӑвӑс ҫулҫи пек чӗтрене ӳкрӗ,
Эрленсе хурланса макӑрса ячӗ,
Упӑшки умӗнче йӑванса кайрӗ.

* * *

—„Эй ҫутӑ хӗвелӗм, эй ырӑ ҫыннӑм,
Е вӗлер мана, е итле мана!
Каланӑ сӑмаху—ҫивчӗ ҫӗҫӗ пек;

Çивчĕ çĕçĕ пекех чĕреме касать.
Хăрамастăп хаяр вилĕмрен эпĕ,
Хăрамастăп çынсен чĕлхинчен эпĕ,
Пĕр хăратăп эсĕ сивнесрен анчах.

* * *

—„Кĕлĕрен тухрăм та килелле утрăм
Аслă урам тăршшĕпе пĕр-пĕччен паян.
Шурă юр шăтăртатнă пек туйăнчĕ;
Çаврăнса пăхрăм та—пĕр этем чупать.
Ман имшер урамсем хуçăлчĕç анчĕç,
Хам пурçăн тутăрпа хупланса тăтăм.
Ярса илчĕ-тытрĕ аллăма пĕр çын,
Пăшăл-пăшăл хуллен хăй сăмах калать:
— Ан хăра, пикеçĕм, ан хăра манран!
Вăрманти таркăн мар, вăрă мар эпĕ,
Эп хаяр ĕмпĕвĕн юратнă тарçи,
Юратнă чури, Кирибей ятлă,
Манăн чаплă йăхăм Малюта йăхĕ.

* * *

—„Ах, тата хытăрах хăраса ӳкрĕм;
Манăн мĕскĕн пуçăм çаврăнса кайрĕ.
Чуптăвать вăл мана, ăнăма ярать,
Чуптăва, чуптăва йăпатса калать:
—Ах чунăм, пикеçĕм, кала-ха мана,
Сана мĕн кирлĕ, сана мĕн парас?
Çутă ылттăн кирлĕ-и, ахах чул кирлĕ-и?
Хаклă чул парам-и, е тумтир кирлĕ-и?

Тумлантарăп сана патша арăмĕ пек,
Пурте сан çине ăмсанса пăхĕç.
Çылăхлă чунăма пĕтме çеç ан пар:
Юратсам мана, ытала мана,
Пĕрре те пулин чуптусам савса!

* * *

—„Вăл йăпатрĕ мана, вăл чуптурĕ мана;
Вут пекех çунать чĕрейĕм çинче
Халĕ те пулин пĕçерсе тăрать
Ун усал тутисем чуптунă çĕрĕ.
Хапхисем умĕнче кÿршĕ арăмсем,
Пÿрнипе кăтартса, кулса çеç тăчĕç...

* * *

—„Аллинчен эпĕ туртăнтăм-тухрăм,
Кайăк пек вĕçсе килелле чупрăм;
Тăрса юлчĕç унта усал аллинче
Тĕрĕллĕ явлăкăм, эс парне пани,
Вăрăм шел тутăрăм хывăнса юлчĕ:
Намăса хăварчĕ, ятăма çĕртрĕ,
Айăпсăр арăмна курайман тăшман.
Мĕскер калĕç ĕнтĕ усал кÿршĕсем?
Кам куçне малашне курăнма хăяс?

* * *

—„Хăвăн арăмна, тĕрĕс арăмна,
Тăшмансен мăшкăлне ан хăвар мана!
Сан çине шанмасан, кам çине шанас?

Урăх камран эпĕ пулăшу ыйтăп?
Çакă çут тĕнчере тăлăхах юлтăм:
Нӳрлĕ тăпра айĕнче ман аттем çĕрет,
Аттемпе юнашар ман аннем выртать,
Манăн аслă пиччем, эсĕ ху пĕлетĕн,
Ют çĕрте ют енче çухалса кайрĕ,
Манăн кĕçĕн шăллăм ачапча анчах,
Пĕр ăс-пуç пуçтарман ачапча кăна".

* * *

Эрленсе хурланса вĕри куççульпе
Макăрчĕ-йĕчĕ Алюна çапла.

* * *

Çын ярать, чĕнтерет Калашник хуçа
Хăйĕн икĕ кĕçĕн тăванĕсене;
Килчĕç икĕ тăван, малтан пуç тайрĕç,
Унтан çак сăмаха пуçласа ячĕç:
„Каласам пире, эй, аслă пичче,
Мĕскер пулчĕ капла, мĕнле ĕç пулчĕ?
Çак тискер кунта, çакă сивĕ каç
Мĕншĕн эсĕ пире чĕнтерсе илтĕн?"

* * *

„Каласа кăтартăп, тăвансем, сире—
Тискер ĕç пулчĕ çав манпала паян:
Ҫамăса хăварчĕ çемьемĕр ятне
Ӗмпĕвĕн сыхлавçи Кирибей усал;
Çавтерех намăса тӳсес çук чунăм,

Çак саттур чĕремпе тӳсес çук ăна.
Ак ыран ирхине çапăçу пулĕ
Мускав шывĕ çинче ĕмпӳ умĕнчех,
Çавăн чух тухăп эп сыхлавçа хирĕç,
Виличчен çапăçăп, чунăм тухиччен;
Вăл мана çĕнтерсен, эсир те тухăр,
Тĕрĕслĕх ячĕпе чăн ĕçшĕн тăрăр.
Эй савнă тăвансем, пĕртте ан хăрăр!
Эсир çамрăк манран, вăйăр та нумай,
Çамрăк пуç çинче çылăх та сахал,
Сире те пулин тен Турă çăлĕ-ха!"

* * *

Ăна хирĕç çапла ик тăван калать:
—„Пĕлĕт айĕ тăрăх çил ăçта вĕрет,
Çумăр пĕлĕчĕ те унталлах шăвать;
Вăрçă хыççăн хирте, вилесем çинче,
Кăвак ăмăрт-кайăк сассипе чĕнсен,
Ĕçкĕ-çикĕ тума, вилесем çиме,
Ун патне чĕпписем пухăнса вĕçет:
Эсĕ пирĕн асли, атте вырăнне;
Мĕн тăвас тесен те хăван ирĕкӳ;
Эпир те тăваншăн тăма пĕлĕпĕр!"

* * *

Ай, ачисем, юрлăр-ха, кĕслĕрсене майласа!
Ай, ачисем, ĕçĕр-ха, ĕçĕрсене астуса!
Кăмăлне кӳрĕр-ха ырă улпутпа
Унăн шурă питлĕ сарă арăмне!

## III.

Ылттăн тăрлă аслă Мускав çине,
Кремль шурă чуллă хÿмисем çине,
Аякри вăрмансен, çÿл тусен енчен,
Çурт-йĕрсен тăррипе выляса-кулса,
Хуп-хура пĕлĕте салатса ярса,
Хĕп-хĕрлех çурăм-пуç хĕрелсе килет;
Хĕп-хĕрлех çурăм-пуç çутăлса килет,
Кĕрпе пек юр çине хĕлхемсем ярать:
Сарă хĕр куç-кĕски витĕр пăхнă пек,
Кăн-кăвак пĕлĕте вăл пăхса кулать.
Мĕншĕнех çурăм-пуç хĕрелсе килтĕн?
Мĕншĕнех савăнса выляса ятăн?

* * *

Пухăнчĕç пĕр çĕре, ак пуçтарăнчĕç
Мускаври хулари йĕкĕт-паттăрсем
Мускав шывĕ çине, кĕрешсе пăхма,
Савăнма, уçăлма аслă кун пирки.
Килсе çитрĕ ĕмпÿ хăйĕн çарĕпе,
Аслă улпутсемпе, сыхлавçисемпе;
Пырсанах пăр çине ылттăн ункăллă
Çут кĕмĕл сăнчăрпа çавăрма хушрĕ.
Çирĕм пилĕк хăлаç вырăн çавăрчĕç
Пĕр-пĕрерĕн тухма, кĕрешÿ тума.
Вара хушрĕ патша, хăй Иван ĕмпÿ,
Йăхăрма кăшкăрма хытă сасăпа:
„Эй, маттур каччисем, кунта тухăр-ха!

Патшăра-аçăра кăмăл тăвăр-ха!
Сарлака картана тухса тăрăр-ха:
Паттăра тухнине—патша ырлăхĕ,
Алайне пулнине—Турă пулăштăр!"

* * *

Вара тухрĕ тăчĕ Кирибей йĕкĕт,
Патшана пилĕкрен хуллен пуç тайрĕ,
Паттăр пĕвĕ çинчен кĕрĕкне хывать,
Хăй сылтăм аллипе пилĕкне тытса,
Сулахай аллипе çĕлĕкне лартать.
Кĕрешме çапăçма хирĕç çын кĕтет...
Виçĕ хут йыхăрса хытă кăшкăрчĕç—
Пĕр йĕкĕт паттăр та вырăнтан сикмест,
Тĕрткелеççĕ анчах пĕр-пĕрне хăйсем.

* * *

Сарлака картара сыхлавçă çӳрет,
Хăравçах çынсенчен вăл кулса çӳрет:
„Кăмăлăр туртмасть-им, шухăш пусрĕ-им!
Çавтерех хăрасан, эппин юрĕ ĕнтĕ,
Праçник кун пирки, чĕррипех ярăп,
Патшамăр кăмăлне кӳресшĕн анчах".

* * *

Ак сасартăк халăх пăлханса кайрĕ—
Парамун Çтаппанĕ картана тухать,
Çав çамрăк хуçа, пĕр саттур каччă,
Хушамачĕпе Калашник хуçа.

Тухать те пуççапать патшана малтан,
Кремльпе таса чиркӳсене унтан,
Пуççапать кайран пĕтĕм халăха.
Вут-кăвар пекех ялтăрать куçĕ,
Сыхлавçă çине тинкерсе пăхать,
Сыхлавçа хирĕç майланса тăрать,
Алсине тăхăнать çапăçма, вăрçма,
Вăйлă хулпуççине тӳрлетсе илет,
Кăп-кăтра сухалне шăлкалать анчах.

* * *

Хуçаран çапла Кирибей ыйтрĕ:
„Каласа пар-ха, эсĕ, ырă çын,
Кам пулать санăн аçупа анну,
Сан мĕнле пулать хушамат-яту?
Кайран кам чунĕшĕн кĕл-тума пĕлем,
Кама çĕнтĕм тесе мухтанма юрĕ".

* * *

Парамун Çтаппанĕ тавăрса калать:
„Эп Çтаппан ятлă, Калашник хуçа,
Лайăх çын аттерен çуралтăм эпĕ,
Турă хушнă тăрăх пурăнтăм эпĕ:
Мăшкăла хăварман ют çын арăмне,
Вăр-хурах çын пек çӳремен çĕрле,
Çутă кун çуттинчен пытанман эпĕ.
Чăн каларăн эсĕ тĕрĕсне-чăнне:
Ырантан кая мар, кăнтăрла тĕлĕпе,
Иксĕмĕртен пĕри тупăкра выртĕ.

Иксĕмĕртен пĕри хăй юлташĕпе
Ĕçкĕ-çикĕ туса мухтанса ларĕ...
Шўт тума, култарма халь тухман эпĕ,
Тухрăм эпĕ паян, тăшман ачи-пăчи,
Хăрушă вăрçа, юлашки вăрçа!"

* * *

Çав сăмахсенчен Кирибей мĕскĕн
Хĕллехи юр пек шуралса кайрĕ;
Вăй вылян куçĕ хуралса кайрĕ,
Пĕтĕм ўчĕпе чĕтресе кайрĕ,
Чĕлхи вĕçĕнчи сăмах чарăнчĕ.

* * *

Пĕр чĕнмесĕр вĕсем уйрăлса тăчĕç,
Паттăрсем çапăçма пуçласа ячĕç.

* * *

Сулласа сулса Кирибей ячĕ,
Хуçана малтан вăл çапса ячĕ
Пĕтĕм вăйĕпе чĕре тĕлĕнчен—
Лешин паттăр кăкри шăтăрт çеç турĕ,
Парамун Çтаппанĕ тайăлса кайрĕ;
Киеврен илсе килнĕ пăхăр хĕрес
Кăкăрĕ çинче çакăнса тăнă,
Çав хĕрес авăнса ўт ăшне путрĕ;
Айĕнчен, сывлăм пек, юн юхса тухрĕ.
Шухăшласа илчĕ Калашник хуçа:
„Турă мĕн çырнинчен иртес çук ĕнтĕ,

Чунăм тухиччен чăн ĕçшĕн тăрам!"
Хăй вăйне пуçтарса хатĕрленчĕ те,
Хăйне май килсенех, юлашки вăйпа,
Курайман тăшмана пуçранах ячĕ,
Сулахай тăнлавне çĕмĕрсех хучĕ.

* * *

Ак çамрăк сыхлавçă йăнăшса ячĕ,
Тайăлса-тайăлса йаванса кайрĕ;
Йăванса кайрĕ сивĕ юр çине,
Сивĕ юр çине çамрăк йывăç пек,
Пуртăпа тĕпĕнчен касса татăлнă
Сĕм-тĕттĕм вăрманти çамрăк йывăç пек.
Çав ĕçе курсанах, хай Иван ĕмпӳ
Çиллипе çиленчĕ, урипе тапрĕ,
Хура куçхаршисем пĕрĕнсе тăчĕç;
Çав саттур хуçана тытма хушрĕ вăл,
Паттăра хăй умне çавăтса пыма.

* * *

Калар ĕмпӳ çирĕп сасăпа:
„Тӳп-тӳрех тĕрĕсне чĕререн кала,
Ирĕк ирĕкпе, е ăнсăрт пирки,
Халь вĕлертĕн-и чи паттăр сынна,
Кирибей чурама, чи тĕрĕс тарçа?"

* * *

—„Чăнне калăп сана, эй Иван ĕмпӳ:
Вĕлертĕм ăна ирĕк ирĕкпе,

Мĕншĕнне-мĕнне калас çук сана:
Пĕр Турра анчах каласа парăп.
Аййапа кĕтĕм, вĕлерттер мана,
Аййаплă пуçăма касма хуш манне;
Ан хăвар ачам-пăчама анчах,
Ан хăвар çамрăк арăмпа тата
Икĕ шăллăма ыралăхупа".

* * *

„Эппин юрĕ, ача, сана çавăншăн,
Саттур паттăр çын, хуçа ывăлĕ,
Чĕререн çапла чăн каланăшăн.
Тăлăх ачусемпе çамрăк арăмна
Хыснаран партарăп тивĕçлĕ укçа,
Санăн икĕ кĕçĕн тăванна эпĕ
Çак кунтан малашне патшалăх тăрăх
Куланай-мĕнсĕрех сут-тума хушăп.
Эсĕ ху ĕнтĕ халех кай, ача,
Вилĕм выранне, çÿлĕ вырăна,
Ху саттур пуçна çавăнта хума.
Пĕр пуртта хушăп хăйраса хума,
Палача хушăп тумланса тăма;
Сана та эпĕ ырлăх тунине
Пур Мускав çынни астуса тăма,
Чи аслă чана çаптарма хушăп".

* * *

Сарлака урама çынсем пухăннă;
Хуйхăллă чан сасси янăрать, вĕркет,

Таврана вăл усал хыпарсем ярать;
Çÿлĕ вырăн çинче, аслă вырăн çинче,
Хĕп-хĕрлĕ кĕпеллĕ, çап-çутах тÿмеллĕ,
Хăйраттарнă, çивчĕ, пысăк пуртăпа,
Хăй çара аллине вăтăрса шăлса,
Савăнăçлă палач уткалать-çÿрет,
Саттур паттăра вăл кĕтсе çÿрет;
Саттур паттăрĕ, çав çамрăк хуçа,
Чуптуса уйрăлать тăванĕсемпе:

* * *

—„Ĕнтĕ, ырă шăллăм-тăвансем, пĕрле
Чуптăвăпăр та, ыталашăпăр,
Ĕмĕрлĕх курмасса уйрăлса кайма,
Пуççапăр кайса Алюна патне,
Ытлашши маншăн куççуль ан тăктăр,
Ачамсем ашшĕ çинчен ан пĕлччĕр;
Пуççапăр эсир атте кил-çуртне,
Пуççапăр тата пур юлташсене,
Хăвăр кĕл-тăвăр Турă çуртĕнче
Мĕскĕн чунăмшăн, çылăхлă чуншăн!"

* * *

Калашник хуçана вĕлерчĕç вара
Хаяр вилĕмпе, намăс вилĕмпе;
Телейсĕр, мĕскĕн, юнланнă пуçĕ
Кусса анчĕ вара хура çĕр çине.
Мускав шывĕ хĕрне пытарчĕç ăна,
Виçĕ çул хушшине, çеçенхир варне:

Купаларĕç унта нӳрлĕ çĕр купи,
Лартса хучĕç çине вĕрене хĕрес.
Шавласа вĕçет çавра çил унта
Çав мĕскĕн хуçа тăприйĕ тавра.
Яланах унта ырă çын иртет:
Ватă çын иртет—сăхсăхса илет,
Йĕкĕт çын иртет—çĕкленсе утать,
Сарă хĕр иртет—хуйхăрса каять,
Кĕслеçсем иртсен—юрри ян ярать.

* * *

Эй-эх, маттур каччисем,
Эсир çамрăк кĕслеçсем,
Йăнтăр-янтăр сассисем!
Ытла хитре пуçласан, хитререх те пĕтерĕр,
Пур çынна та юрласа ун кăмăлне çитерĕр:
Мухтав ăслă улпута!
Мухтав хитре арăмне!
Мухтав мĕн пур халăха! мухтав!

1837. *К. В. Иванов куçарнă.*